# Паттăрлăх



## Вася Коробко

Василий Иванович Коробко 1927 çулхи пуш уйăхĕн 31-мĕшĕнче Чернигов облаçĕн Семенов районĕнчи Погорельцы ялĕнче çуралнă. Черниговщинăри партизан юхăмĕнче хастарлăхпа палăрнă вăл. Разведчик тата çыхăнуçă, каярах вара подрывник пулнă. Гитлер салтакĕсене тата çар техникине турттаракан вун ултă эшелона сирпĕтсе янă, вунă пăравуса йĕркерен кăларнă. 1944 çулхи ака уйăхĕн пĕрремĕшĕнче Белоруссире пуçне хунă. Ăна Ленин орденĕпе тата Хĕрлĕ Ялав орденĕпе икĕ хут наградăланă.



# Тытма çук чее подрывник

**(Михаил Ратушный калавĕ)**

Лагерьте вăл ăнсăртран тупăнчĕ. Çăра тĕмсем витĕр часовой умне тухса тăчĕ. Лешĕ вара аллинчи винтовкине çирĕпрех тытрĕ те ачана шанмасăртарах сăнарĕ.

– Ăçта каятăн, каччă? – ыйтрĕ вăл хаяррăн.

Арçын ача ун çине куç айĕн пăхса илчĕ те урисене хăюсăррăн пускаларĕ.

– Сирĕн пата, – терĕ те вăл пĕр хушă шăп тăчĕ. – Мана командир патне ертсе кайăр-ха.

– Еплескер, тӳрех командир патне... Мĕн сăлтавпа кирлĕ вăл сана?

– Партизан ретне тăрас килет. Фашистсене çапса тăкасчĕ.

– Ха-ха! – кулса ячĕ часовой. – Фашистсене хĕнеме мĕнлерех чышкă кирлине пĕлетĕн-и? Эсĕ хăвăн çине пăх-ха: çĕр çумĕнчен те уйрăлайман. Кăштах çитĕн... Ун чухне калаçăпăр.

– Илсе кайăр та ĕçĕ те пĕттĕр! – хăйĕн сăмахĕнчен пăрăнмарĕ арçын ача.

Часовой шухăша путрĕ.

– Иван! – чĕнсе илчĕ вăл иртсе пыракан партизана. – Çак ачана Александр Петрович патне ертсе кай, унпа мĕн тумаллине калатăр...

Тепĕр минутран арçын ача партизан отрячĕн командирĕ умне çитсе те тăчĕ.

Çӳллех мар хăй, ашшĕн кĕрĕкне тăхăннăскер çине-çинех сăмсине нăшлаттарать тата тархасланăн калать:

– Мана хăвăр отряда илĕр-ха, ну тархасшăн. Ӳкĕнме тивмĕ...

Александр Петрович Балабай ачана тимлĕн сăнарĕ те пĕр вăхăт шăп тăнă хыççăн çапла ыйтрĕ.

– Мĕн ятлă эсĕ?

– Вася Коробко. Погорельцы ялĕнчен... – Тата хушса та хучĕ. – Вăрçăччен пилĕк класс вĕренсе пĕтертĕм.

Çапла каласа вăл хăй текех пĕчĕк маррине кăтартасшăн пулчĕ. Командир кулса илчĕ те хул пуççине сиктерчĕ.

– Пирĕн отрядра мĕн тăвасшăн-ха эсĕ, Вася?

– Мĕн хушнине пĕтĕмпех тăвăп.

Арçын ача командир иккĕленнине асăрхарĕ те çийĕнчех хушса хучĕ:

– Эсир мана хăвăр пата илмесен те эпĕ кунтан ниçта та каймастăп. Вăрмантан яла таврăнмастăп.

– Авă мĕнле эсĕ! – каллех кулса илчĕ Балабай. – Юрĕ. Апла пулсан тимлĕ итле. Пире лайăх разведчик кирлĕ. Вăл тăшмансем хушшинче ĕçлесе вĕсен кашни хусканăвĕ тата планĕ çинчен пĕлтерсе тăтăр. Эсĕ çавăн пек разведчик пулайăн-и?

– Пулаятăп, Александр Петрович, – терĕ арçын ача çирĕппĕн.

– Эппин хăвăн ялна таврăн та комендатурăна вырнаçма тăрăш.

– Юрать, командир юлташ!

– Пирĕн пуплев çинчен никама та пĕр сăмах та ан кала, – асăрхаттарчĕ Балабай.

Çапла вун тăватă çулта Вася Коробко пĕрремĕш задани илет, ăна часах тивĕçлипе пурнăçлать.

Килне таврăнсан вăл комендатурăра ĕçлеме тытăнать: урай шăлать, çăвать, кăмака хутать, полицайсем хушнине итлет.

– Кур-ха, епле тăрăшать, – куç хĕсеççĕ лешсем пĕр-пĕрне. – «Çĕнĕ йĕркене» мĕнле пăхăнмаллине пĕлет.

Васьăн вăрттăн шухăшне вĕсем тавçăрма та пултараймаççĕ. Чăннипе вара çак ача, харсăрскер тата сăнама юратаканскер, Гитлер гарнизонĕ çинчен вăрттăн хыпар пуçтарать, автомашинăсене, пулеметсене ăçта пытарнине, офицерсем кам патĕнче пурăннине пĕлсе тăрать. Çакна вăл пĕтĕмпех çыхăнуçăсем урлă отряда пĕлтерет, хăш чухне вара хăй те вăрмана тухма май тупать. Ку тĕллевпе Вася комендантран киле кайса курма ирĕк ыйтать тк пахчасем витĕр партизансем патне васкать. Александр Петрович вăл килсен ялан савăнать – çамрăк разведчик çав тери пĕлтерĕшлĕ хыпарсем илсе килет-çке. Пĕррехинче вăл ачаран çапла ыйтать:

– Ну, пионер, мĕнле унта сирĕн ялта? Листовкăсемпе еплерех?

– Пурте йĕркеллĕ, Александр Петрович, – тет Вася. – Пĕтĕмпех салатса тухрăм. Пĕрне вара комендатурăра та çыпăçтартăм.

– Ăçта, ăçта? – сисчĕвленчĕ Балабай.

– Комендатура алăкĕ çине, – сăпайлăн ăнлантарчĕ Вася.

Командир сăнĕ тĕксĕмленчĕ.

– Никам та курман-çке. Тĕттĕмччĕ. Эпĕ шăппăн.

– Ну, хăв пĕл, асăрханулла пул...

Çав листовкăсенче партизансем ял халăхне нимĕçсенчен çăкăр, выльăх-чĕрлĕх, пахча çимĕç, ăшă тумтирпе пушмаксене пытарса хума хушнă. Вася нумай листовка çыпăçтарнă. Анчах ку ăна çителĕксĕр пек туйăнать. Вăл тăшмана хирĕç курăмлăрах ĕçлес шухăшлă. Часах хăйĕн вăхăтне кĕтсе илет. Вася отряда хыпарласа тăнине пула штабра нимĕç гарнизонне аркатмалли план шухăшласа тупнă.

Çав сивĕ раштав каçĕнче гитлеровецсем пирĕннисем тапăнасса пачах кĕтмен. Лăпкăн çеç çывăрма выртнă. Часовойсем те тĕлĕрсе кайнă. Çĕрлехи тĕттĕмре вĕсем тăватă енчен çывхаракан мĕлкесене те асăрхаман.

Тапăну кĕтмен çĕртен пуçланнăран фашистсем тăна кĕрсе те ĕлкĕреймен. Пӳртсенчен вирхĕнсе тухса, унталла-кунталла тĕлсĕр персе, вĕсем ăçта лекет, çавăнта чупнă. Анчах ниçта та вĕсем пульăсенчен хăтăлайман.

Çав каç тăшманăн пĕр пулемечĕ те сас паман. Партизансем çĕр аллă ытла фашиста тĕп тунă, нимĕçсен автомашинисене çунтарса янă, хĕç-пăшалĕпе вăрçă хатĕрĕсене пуçтарса илнĕ.

Çак çĕнтерӳшĕн Вася пуринчен ытла савăнчĕ пуль, ку унăн пĕрремĕш çĕнтерĕвĕ-çке.

Часах Вася гитлеровецсем хăйне сыхланине сисет те кун çинчен партизан отрядне пĕлтерет. Командир пурне те пĕр тăхтамасăр вăрмана куçма хушать. Отрядра Васьăна çыхăнуçă пулма сĕнеççĕ. Анчах ачана ку шухăш тивĕçтермен: лара-тăра пĕлменскере ытларах кирлĕ. Вăл подрывник пулма йăлăнать. Командир ирĕк парсан Вася Коробко часах фашистсем умне пысăк хăрушлăх кăларса тăратать. Гитлеровецсене тата хĕçпăшал турттаракан эшелонсене хысакран пăрса янă, нимĕç автомашинисем çӳрекен çулсене минăланă, складсемпе кĕперсене сирпĕтнĕ. Фашистсем ăна кăлăхах шыраççĕ – Васьăна тытма çук. Хăюллă та хăрама пĕлмен Вася яланах тăшман кĕтмен вырăнта тухать. Çав вăхăтра вăрçă вĕçленсе пырать. Мухтавлă совет çарĕсем тăшман вăйне палăрмаллах чакараççĕ. Часах партизан отрячĕ çапăçнă территорие фашистсенчен тасатать. Партизансем Хĕрлĕ Çар пайĕсемпе пĕрлешеççĕ.



– Ну, Васек, сывă пул, – командир çамрăк патриотăн аллине çирĕп чăмăртать. – Халĕ санăн килте те ĕçлемелли чылай. Вĕренме çӳрĕн. Ялсене те йĕркене кĕртмелле...

Вася Коробко килĕнче юлать. Анчах унăн çаплах вăрçă канонади янăраса тăнă вырăна каяс килет. Фронтра юн юхнă тата совет çыннисене фашистсем асаплантарнă вăхăтра вăл лăпкă пурăнаймасть. Коробко хăй ирĕкĕпе фронта каять.

Васьăна опытне кура Украинăри пĕрремĕш партизан дивизийĕн диверси ушкăнне йышăнаççĕ. Каллех фашист эшелонĕсем çулран пăрăнса кайма, кĕперсем сывлăша çĕкленме тытăнаççĕ...

...Фронт вара анăçаллах куçса пырать. Канонада сасси кунĕн-çĕрĕн шăпланма пĕлмест. Партизансене вăл тухăç енчен илтĕнет. Вĕсемшĕн Белоруссии вăрманĕсенчех – фронт.

– Часах Польшăна çитетпĕр, – тет диверси ушкăнĕн командирĕ Васьăна. – Унта фашистсене çапса тăкăпăр. Халĕ вара разведкăна тухмалла. Виççĕн каятăр. Асăрханулла пулăр, засадăна ан çакланăр. Ансăр колея тĕлне çитсен лайăх пăхăр: фашистсем мĕнле те пулин сăтăрла ĕç хатĕрлемеççĕ-и?

Çапла каласа командир карттă çине кăтартать. Чăн та, чикĕ çывăхрах иккен. Юнашарах – Брест. Польша... Мĕн кĕтет-ши вĕсене унта?

Тепĕр тесен, Вася халь ун çинчен шухăшламасть те. Унăн хăвăртрах задание пурнăçлас килет.

...Вăрманта вара çуркунне шăрши тăрать. Йывăçсенчен тумла юхать. Çăра мар тĕтрен тĕттĕм кăвак хумĕсем симĕс хырсем тата шурă хурăнсем çийĕн чӳхенеççĕ. Ура айĕнче йĕпе юр сас парать. Виçĕ разведчик ансăр колея хĕррипе асăрханса иртет.

Акă чугун çул юппи хыçалта юлчĕ. Пĕтĕмпех карттăра кăтартнипе килĕшсе тăрать. Маларах – станци пӳрчĕ, ун хыçĕнче вара – юхан шыв урлă выртакан кĕпер...

– Эсир, ачасем, шăппăн малалла кайăр, – терĕ ушкăнра асли. – Эпĕ вара çав тӳпем патне кайса пăхам, фашистсем пуррипе çуккине тĕрĕслем. Часах сире хăваласа çитĕп...

Çӳллех мар сăрт çине кăтартса асли унта кайма хатĕрленчĕ. Сасартăк унти хырлăхран пулеметран пеме тытăнчĕç. Вася юр çине ӳкрĕ. Разведчиксенчен пĕри тĕм хыçне чăмнине куç хĕррипе курса юлчĕ.

Çамрăк патриотăн чĕри тапма чарăнчĕ. Ку ĕç 1944 çулхи çуркунне Беловежски вăрманĕнче пулса иртрĕ.

### Аннене

Çĕр-шыва сыхлама,
Хам киле юратса
Эпĕ кайрăм вăрçа
Аннерен уйрăлса.

Тăвансем макăрса,
Хам кил-йыш пиллесе,
Мана алă сулса
Юлчĕç куççульленсе.

Эпĕ çитрĕм вăрçа,
Вутлă çулăм ăшне:
Тытăça-тытăça
Аркатма фрицсене.

Йывăр пулчĕç кунсем,
Нумай пĕтрĕç туссем,



Анчах хытрĕç алсем,
Çирĕпленчĕç чунсем.

Чун юратнă анне,
Эпĕ килтĕм киле,
Сурансен-çĕвĕсен
Пĕлейместĕп шутне.

Юратса эс мана
Кунĕн-çĕрĕн кĕтни –
Вăрçăран таврăнма
Чунтанах пиллени.

Эх, аннеçĕм, сана
Пысăк тав чунтанах.
Кураймастăп вăрça,
Вăл ан пултăр нихçан!

*Алиса МИХАЙЛОВА.*

Канаш районĕ,
Ăвăспӳрт Кипеч.

### Палăк умĕнче

Тăраççĕ çӳллĕ чăрăшсем,
Тем шухăшлаççĕ те кашлаççĕ.
Çак палăк умĕнче вĕсем
Хурал салтак пек туйăнаççĕ.

Пуçтарăнаççĕ çакăнта
Кашни çулах ял çыннисем,
Тăраççĕ пуç тайса кăна –
Аса килеççĕ салтаксем.

Çаплах кашлаççĕ чăрăшсем,
Темскер çинчен пăшăлтатаççĕ.
Çилпе чĕтреççĕ туратсем:
Пур халăха, тен, саламлаççĕ.



Йышпа тăратпăр парадра,
Куç умĕнче ват чăрăшсем.
Сисместĕп хам та – хăлхара
Кĕç янăрарĕç сасăсем.

– Аван-и, тусăм Марине?
– Мĕнле пурнатăн, Укçине?
– Салам сана, Ленук ачам!
– Верук, мана эс ан мансам!

– Чипер те сывă пурăнар,
Çут хĕвелпе те савăнар,
Эпир пуç хунă çапăçса,
Сире пурне те сыхласа...

– Мухтав сире, паттăрсене!
Мухтав салтакăн арăмне!
Сире манмастпăр ĕмĕрне! –
Илтетĕп сăвă сăмахне.

Тăраççĕ çӳллĕ чăрăшсем,
Шав шухăшлаççĕ те кашлаççĕ.
Çак палăк умĕнче хăйсем
Хурал салтак пек туйăнаççĕ.

*Оксана АНДРЕЕВА.*

Канаш районĕ,
Ăвăспӳрт Кипеч.

### Юрату хăвачĕ

Пĕр халап, ĕç-пуç çинчен халь
Ман сăмахăм пулĕ.
Вулакан çавăн çинчен-ха
Теприне те калĕ.

Çамрăк вăхăт – лайăх вăхăт.
Кам-ха ăна туймарĕ?
Сисĕнмесĕр иртет хăвăрт.
Чуппине кам чарĕ?

Икĕ çамрăк, икĕ кӳршĕ,
Чунĕ те ынатлă.
Шкулпала ак сыв пуллашрĕç –
Ĕмĕтсем çунатлă.

Пĕр ирпе хĕвел пытанчĕ,
Пĕлĕтсем шăваççĕ.
Мирлĕ ял-хула шăпланчĕ,
Пурте çывăраççĕ.

Тӳпене хуплать сасартăк
Самолет кĕрлевĕ.
Чĕтренсе илет тавралăх:
Ку мĕскер шăв-шавĕ?

– Вăрçă тухнă! – хыпарлаççĕ. –
Нимĕçсем ав тапăннă!

Ар çынсем вăрçа васкаççĕ,
Салтак тумĕ тăхăннă.

Икĕ çамрăк, икĕ кӳршĕ,
Чунĕ юратуллă.
Халь уйăрнăран çак хушă
Туйăм ыратуллă.

Сыв пуллашрĕ хĕрпе каччă,
Ăшшăн ыталарĕ:
– Эсĕ манăн çутă шанчăк,
Çут хĕвел, – каларĕ.

– Упрасам хăвна эс, тусăм, –
Куççульне хĕр шăлчĕ,
Асăнма сăмса тутри вăл
Каччине тыттарчĕ.

Ак вĕçеççĕ виç кĕteслĕ
Çырусем пĕр вĕçĕм,
Уй-хир урлă, ял-ял урлă –
Таврара вут-çулăм.

Пĕр ирпе çăхан кранклатрĕ.
Хĕр чĕри шарт сикрĕ.
Мĕнлерех-ши савнă тусĕ?
Май пулсан халь вĕçĕ.



Кунĕн-çĕрĕн хĕр каларĕ
Юрату сăмахĕ.
Туррине те тархасларĕ,
Пур-çке ун хăвачĕ.

Уйăхран ун тусĕ килчĕ,
Хĕр вĕçме те хатĕр.
Каччă чунĕ çеç хурланчĕ –
Халĕ вăл урасăр.

Хĕр ăна нихçан пăрахмĕ,
Ăшшăн ыталарĕ:
– Кам-ха санăн çутă шанчăк,
Çут хĕвел те? – терĕ.

Ялти çын хĕре ырларĕ,
Каччине мухтарĕ:
– Вăрçă паттăрĕ эс, – терĕ. –
Çĕр-шыва сыхларăн.

Вăрçă пĕтрĕ, кĕр кĕрлерĕ
Çĕнтерӳ салючĕ.
Ял-ял çийĕн халĕ вĕçрĕ
Паттăр çынсен ячĕ.

*Вероника ВАРФОЛОМЕЕВА.*

Канаш районĕ,
Ăвăспӳрт Кипеч.

### Ăçта-ши санăн, ветеран, куллу?

Вăрçă... Хаярлăх янăрать çак сăмахра.
Мĕн чул çынна пĕтернĕ вăл вутра!
Çапах пĕри те каялла чакман,



Çĕнтерĕве нимĕçсене паман.
Пĕрин хыççăн теприне тĕп тунă,
Хăйсем вилнĕ, унтах выртса юлнă.
Вĕçленнĕ сĕмсĕр вăрçă. Çĕнтерӳ!
Ăçта-ши санăн, ветеран, куллу?
Сан мĕншĕн куçусем пĕр шывланаççĕ?
Çав вăрçă кунĕсем асран тухмаççĕ...

*Настя ЛЕОНТЬЕВА.*

Вăрмар районĕ,
Мăнçырма.

### Паттăрсене мухтав!

Çуллахи шăрăх кун. Ирхине
Çамрăк çын пит васкать хир енне.
Урампа пынă чух ăнсăртран
Илтĕнет çак хыпар радиоран.
– Юлташсем! Чикке пăсрĕç фрицсем!
Пĕр çын пек кар! тăрар пурсăр та.
Çамрăк çын хыпара кĕç илтсен
Вăл тĕв турĕ фрица тавăрма.
Юнлă вăрçă пырать таврара,
Аманать çамрăк çын вăрçăра.
Юсанса кĕç тухать эрнерен,
Вăл васкать фашиста пĕтерме.
Пăрлă шыв, шартлама сивĕ те,
Çумăр пек тăкăнсан та пульли –
Салтака илеймен нимĕн те,
Медальсем вара – кăкăр тулли.
Йăвинче пĕтерсе ирсĕре
Тăнăç пурнăç парайрăр пире.
Çĕнтерӳçĕ салтак, эп сире
Манас çук, парăмра ĕмĕрех!

*Диана ЗУБКОВА.*

Етĕрне районĕ,
Мăн Чураш.

### Турăçăм, çăлсам!

«Кĕтетĕп кашни кун,
Пăхатăп анăça.
Эх, хурланать-çке чун –
Атте кайрĕ вăрçа.

Килтен вăл кайиччен
Хуллен çапла каларĕ:



«Кĕтсемĕр киличчен.
Каятăп эпĕ халĕ».

Алăк хупăнсанах
Чĕрем тӳрех пушанчĕ.
Йĕни те кăлăхах –
Фронта атте ăсанчĕ.

Вĕлерĕç, тен, ăна
Тусне çăлнă чухне.
Тен, илĕç тыткăна
Аманнăскерсене.

Эй, Пӳлĕхçĕм! Санпа пуплем.
Мана халь эсĕ итлесем.
Тăшмана такăнтарсам,
Аттене хăват парсам.

Таврăнтăрччĕ вăл яла
Çухатмасăр сывлăхне.
Пултăрччĕ çумра ялан
Уйрăлмасăр ĕмĕрне!..»

Çавăн пек кала-кала
Кукамай йĕретчĕ.
Куççульне шăла-шăла
Малалла пуплетчĕ.

*Мария ДАНИЛОВА.*

Канаш районĕ,
Ямаш.

### Пуçне хунă ывăл

Çисĕм пек çапса аркатнă
Вăрçă пиншер хулана.
Юнпала тăшман хуратнă
Тăнăçлăх ыйтакана.



Вăрçа каяс умĕн ывăл
Ыталарĕ амăшне.
Пăшăлтатрĕ чĕререн вăл:
«Тĕп тăватпăр фрицсене».

Ак фронтран çыру та килчĕ
Ватă амăшĕ патне:
«Паттăр ывăл пуçне хучĕ
Тĕп туса тăшмансене...»

Алăри конверт çине
Çумăр пек куççуль тумларĕ.
Тек кураймĕ ывăлне,
Пурнăç сăнĕ те юлмарĕ.

*Александр ДИМИТРИЕВ.*

Канаш районĕ,
Энтрияль.